К С(Чув)
Ю41
Ч-31122

ТОЛИЙ ЮМАН

# ÇУНАТСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-031122

К С(чув)
Ю41

АНАТОЛИЙ
ЮМАН

# ҪУНАТСЕМ



САВАСЕМ
ПОЭМА

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1988

К 84.09(=чув)6-5
84(2Рос)[чув]Аб4-51-52
ББК 84.Чув 7—5
Ю 41

ПРОВЕРЕНО
2010

31122-чув.

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Ю $\frac{4702650000-087}{М136(03)-88}$ 43—88

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1988 ҫ.

ISBN 5—7670—0036—0

# САВĂСЕМ

## ÇУНАТĂМ

Хавхалану тĕнчи! Ăçта-ши эс?!.
Сан хапхунтан алхапăлах кĕреймĕн.
Таçта таратăн эс, шыранăçемĕн,
Епле тупас сана, йăлттам кĕтес?

Тăван çĕр çăлĕ ялтăрать умра.
Тунсăхăма сиплерĕ унăн шывĕ.
Ĕнерĕнчĕ ман сассăм, юррăм — сывă,
Шăнкăртатса вăй илчĕ, янăрать.

Пегас кукалесе çăл уçрĕ... Вăл —
Ачалăхри эп пĕлнĕ Чăнлă шывĕ.
Çăл тулăх чух—эп хам та çирĕп, сывă,
Çуталчĕ сăнăм хĕвел евĕр йăлл!

Тĕтрелĕх витĕр утса пынă пек,
Чи мелсĕр чух сан йыхравна илтетĕп.
Эс уçнă алăкран хавхаланса кĕретĕп
Кĕтмен çĕртен çунат хушăннипе.

Чĕремçĕм витĕр тухнă туйăмсем!
Сире курмашкăн эп хавас, вăранăр!
Мĕскер çитмест сире? Ăçта суранăр?
Сăрсем эп илсе килтĕм, кĕвĕсем...

Çĕнелчĕ вĕсемпе ман чун-чĕрем...
Çĕклет мана хавхалану çуначĕ.
Мана йăлттам асамлăхне вăл пачĕ,
Ăна пуласлăхах эп çитерем.

## А. Г. НИКОЛАЕВ КОСМОНАВТА

Ун чух ялтаччĕ эп. Еççи пыратчĕ.
Пĕлетĕн çурла кунĕ мĕнлине.
Утса çӳрет уйра хĕвел хăвачĕ,
Кĕлтен-кĕлтен тăкать хăй ăшшине.

Сасартăк репродуктор хыпарларĕ,
Тӳрех чухларăм: Левитан сасси.
Мăнаçлă сас ман чунăма хускатрĕ,
Мĕскер-ши пур Мускавăн каласси?

Аван хыпар! Вăл тĕнчипех ян кайтăр!
Ача пек чупкалатăп эп вăш-ваш.
Каларĕ диктор:
— Уçлăхра — çĕн кăйкăр!..
Ку хутĕнче-мĕн кăйкăрĕ—чăваш!

Çак чаплă хыпарпа эп çунатлантăм.
Кун пеккине сунманччĕ илтессе.
Эп хам чăваш пулнишĕн хаваслантăм,
Пуплерĕм хампа хам та тĕлĕнсе .

Йăлттам самант кунпа кăна иртмерĕ,
Кайран татах та тухрăн уçлăха.
Çĕршыв ятне каллех çӳле çĕклерĕн,
Мухтав эс кӳтĕн савнă халăха.

Этем ăс-хакăлĕ хăюллă, çивĕч,
Ун ĕçĕ те ĕмĕтĕнчен юлмасть.
Тен, пирĕн ĕмĕрти çыннах-и тивĕ
Ытти планетăна çитсе ларма?

Этемĕн уçлăхри чи чăрсăр ĕçĕ
Инçе чĕнет Çĕр ывăлне-хĕрне.

Çак чаплă эстафетăна пĕр вĕçĕм
Космонавтсем пиллеççĕ пĕр-пĕрне.

Пĕри çĕкленнĕ-тĕк — теприн çул уçă!
Ăна та уçлăха кайма черет.
Ман халăхăн шăпи те, кутăруçăн,
Çав аслă вĕçевпе пĕрле хĕрет.

Ман халăхăн кунçулĕ те мал енĕ,
Çĕнтерĕвĕ те, чысĕ те — унра.
Хăй паттăрне вăл ăшшăн: «Кăйкăр»,— тенĕ,
Ăна усрать вăл яланах чунра.

## ЯТУ ЧЕРРИСЕМПЕХ...

Ентешĕмĕре — Ленин тата СССР Патшалăх премийĕсен лауреатне, хими наукисен докторне И. И. Корнилов профессора халалласа.

«Эпир ĕмĕтленмешкĕн тивĕç»,— тенĕ
Хисеплĕн-сумлăн Яковлев пире.
Чăваш ачи ахальтен мар иленнĕ
Питех те тараватлă Чĕмпĕре.

Хай, Яковлев, чун-чĕререн ĕненнĕ:
«Невтон, Платон та тухĕ чăвашран!..»
Пĕри ун умĕнчех чупса çӳренĕ,—
Кармуç Ванькки пулать иккен ятран.

Анчах ун чух вăл палăрми çӳренĕ,
Сăхман уртса та çăпата сырса.
Вĕренессе ачи маттур вĕреннĕ,
Шурсухалтан вăтаннă, тĕл пулсан.

Туяллă, шурă çӳçлĕ сумлă ваттăн
Пехилĕ тӳрре килнĕ-мĕн кайран:
Пур вăй-хална наукăна эс патăн,
Профессора эс тухрăн чăвашран.

Ас-хакăл çӳллĕ пусăмне эс çитрĕн,
Çĕклерĕн çав шая çĕршыв чысне.
Ырми-канми ĕçлерĕн каçăн-ирĕн,—
Тӳрре кăлартăн халăх шанăçне.

Малашлăха эс турăн çирĕп утăм,
Эс пултăн вăйлăрах та вилĕмрен.
Ĕнен, ентешĕм, çӳрĕ сан яту та
Чĕррисемпех паян е ӳлĕмрен.

## КИЛ ÇУТИ

Çитме пултарĕ çын тĕнче хĕрне,—
Мĕн хаклă, мĕн тăсать ун ĕмĕрне?

Ун асĕнче Тăван çĕршыв ялан,
Эс вăйлă та, эс ятлă унпалан.

Тăван ялта е хулара пур кил,
Аçу-аннӳ, вĕсем пилленĕ пил.

Тулать çын чунĕ сиплĕ телейпе
Çӳренĕ чух ачалăх çулĕпе.

Пулни-иртни йăлт çыннăн асĕнче,—
Йăлтăртатса тăрать умри тĕнче.

Кил пур чухне патвар хунать ăру.
Поэт, киле мухтатăр сан юрру!

Çын килсĕр чух—телейсĕр, мĕскĕн чун,
Ни шанчăкĕ, ни хӳтлĕхĕ çук ун.

...Тантăшсенчен пулман-ха катăкрах,
Эпир те пурăннă ыр кил-çуртрах.

Хăй асаттемĕр Яковлев пĕрре
Пилленĕ пулнă шкул çуртне пире.

Çав хăтлă та сăпайлă хваттере
Çуралнă кунтанпа туять чĕре.

Эп çамрăкла юлайнă аттерен,
Вăл çурт та-мĕн лартса ĕлкĕреймен.

Çунатăм çĕкленсе çитес чухне
Анне вĕçлерĕ йывăр кунçулне.

Шăллăмпала мана — ик тăлăха —
Кĕç уйăрчĕ шăпа яланлăха.

...Пырса кĕрсессĕн халь тăван яла,
Хавасланатăп пĕчĕк ачалла:

«Аван-и, килĕм!..» Халĕ кунта класс,
Чи яш ăру хама та палламасть.

Мачча кашти çинче сӳре пăти...
Вăл çеç сыхланнă çак куна çити.

...Тухса тăрать ӳкерчĕк куç умне:
Эп пĕчĕккĕ. Умра — атте-анне.

Пăта çапса атте çакать сăпка,
Анне юрлать мана лăпка-лăпка...

...Ачалăхăм куç умĕнче йăлтах,
Паян иленнĕ яш ăру кунта.

Ман шăллăмсем те йăмăксем, пехил!
Халь сирĕн сассăрпа кĕрлетĕр кил.

Пĕкетĕп пуçăма çĕре çити,
Ан сӳнтĕр ĕмĕрех ман кил çути.

* * *

Ман ялта пысăк мар укçа хакĕ.
Чĕн:
— Ялйышăм, атя нимене!..
Çĕр тус çитĕ — йыш хатĕр те акă,
Ял пĕрлешĕ пĕр тус-çемьене.

Кил-çурта çăрапа питĕрмеççĕ
Ман ялта. Пур «çăрч». Вăл—пускил.
Чи пахи — çыннăн ĕçĕ те ĕçĕ.
Ырă турăн —
Ăсатĕç:
— Пехил!..

Аякра çӳресе ывăнсассăн,
Таврăнсассăн яла, терт тӳссе,
Кĕтсе илĕ ялйышăм хавассăн,
Тĕпеле эс тăванлăн иртсем.

Эс чунна ялйышран пытараймăн,
Курса тăрĕ вăл витĕр, сăна.
— Кам ачи? Кам тавращĕ?
— Ку — çавăн!..—
Хуравлаççĕ тĕп-тĕрĕс сана.

Ман пирки саралсан çын элекĕ,
Тĕрĕсле эс пырса ялйышран:
Элекçе ун чух тивĕçĕ лекĕ,
Çăннине те эс пĕлĕн вара.

## ЫВĂЛĂМА

Этемлĕх астăвать çĕр яшлăха!..
Хĕрӳллĕ яшлăх! Юл яланлăха!
Корчагин Павка, Кошевой Олег...
Эпир çунасшăн пулнă вĕсем пек.

Çĕн ăрăвăн çĕн сăнĕ—урăх вăй.
Йыхрав çĕклерĕ Çĕнĕ Уренгой.

Никам та хистемен, паллах, сана.
Санра эп туйрăм хамăн яш сăна.

Эпир чухне пулман та стройотряд,
Пире, çавах çĕкленĕ пĕр хăват —

Ялан ыр ĕçшĕн чĕререн çунни,
Çĕршыв ĕçне хăв ĕçӳнте курни.

Отряд каяс тĕлте ӳкмест йĕтре,—
Тăшман вĕçмест, çăхан пек, пĕлĕтре.

Инкек-синкек пĕтмест, çавах та пур,—
Кĕтмен çĕртен сиксе тухать вăл, мур.

Çула ăсатнă чух çавăнпалан
Пăшăрханать атте-анне ялан.

Мĕскер вăл «Уренгой»? Шартах сикен:
Ку «вилĕм шăтăкĕ» тени иккен.

Эппин, халь куçтăр «Пурнăç кĕтесне»,—
Тесе эс пуçăнтăн çĕршыв ĕçне.

Мĕнле ăсатрăм-ши инçе çула?
Епле пулсан та, ывăл, ан ятла.

Эс тухса кайрăн шăппăн ир çинче,—
Сасартăк кичемленчĕ çут тĕнче.

Шăп çав кичем те йывăр самантра
Тăван çĕршыв сăрланчĕ чунăмра.

Йĕрлетĕп карттă тăрăх... Çул инçе...
Çап-çут куççуль шăрçаланать, тилçе!

Вăл çар отрячĕ мар-ха, стройотряд,—
Çапах кĕрешӳре малта пырать.

Этем ури пырса тивмен çĕрте,
Ман ывăл пурнăç кăвайтне чĕртет.

Çул уçасси вăл çăмăл мар, çапла...
Эппин, унта эс ялкăш çулăмла.

Тинех çыру та çитрĕ, ак, санран,—
Хĕвел тĕснех илет килйыш сăнран.

Çыратăн эсĕ: «Ĕç-пуçсем аван,
Паллах, кунта нумай шăна-пăван.

Çапла, ку шурлăх тинкене илет,
Йĕп вăрри пек çĕкленчĕ вертолет.

Килти пек мар та хăтлăхĕ, эпир
Тĕллев патне пыратпăр каç та ир.

Ан пăшăрханăр, пирĕн стройотряд
Хăй ĕçĕпе хăварĕ ырă ят.

Хĕрӳ ĕç-пуç карапĕ меллĕн, шеп
Сив шурлăхра малашлăха ишет.

Ку ен те çывăхланчĕ майĕпен,
Çӳретпĕр çырлана кунтăсемпе.

Тӳпемĕр кăвакрах пуль ялтинчен,
Ҫавир пек курăк — юмахри тĕнче!

Поляр унки ăçта?.. Тĕлĕнмелле!..
Шыва кĕретпĕр кăнтăр енчилле.

Çу ырлăхĕ пымасть çав вăраха.
Шанатпăр туслă, ăшă вучаха...»

...Çĕн ăрăвăн хăй сăнĕ—урăх вăй.
Ана çĕклерĕ Çĕнĕ Уренгой.

Чăваш ятне ан çĕрт, ачам, пехил!
Ялан хĕвеллĕн çиçтĕр тăван кил.

## ҪАМ ВӐЛ ЕНТЕШ?

Пускилсем патне пырсассӑн,
Хам ҫемье пекех тӑван.
Кӳршӗ ял... Унта кайсассӑн,—
Хамӑръял ҫынни аван.

Района ҫитсе тухсассӑн,
Кӳршӗ ялӑн ҫыннине
Ӑнсӑртран эс тӗл пулсассӑн,
Туйӑн ҫывӑх иккенне.

Хулана ҫитсе тухатӑн,
Пӗр районӑн ҫыннине
Эс сасартӑк тӗл пулатӑн,—
Туртӑнатӑн ун енне.

«Ку ентеш-ҫке манӑн!»—тетӗн,
Тӗлпулушӑн савӑнса.
Чӗререн унпа пуплетӗн,
Ентеше телей сунса.

Мускава ҫӳрет ҫын тӑтӑш,
Халь унта ҫитме ансат.
Тӗрлӗ ҫын сӗрлет-ҫке хутӑш,
Кӗҫ илтетӗн ҫывӑх сас.

Ентешӳ иккен ку санӑн,
Палламан, пӗр ен ҫынни.
Ҫалаҫатӑн эс тӑванӑн,
Йӑлт тӗпчетӗн:
— Мӗн ҫӗнни?

Чикĕ урлă та каяççĕ
Ку чухне ман ентешсем.
Пĕр-пĕрне сăнран паллаççĕ
Пĕр патшалăх çыннисем.

Ютра чух чи аякри те
Чуна çывăх та тăван.
Эс ăна: «Ентешĕм»,—тетĕн,
Ĕмĕр-ĕмĕр астăван.

## ИККЁН

Кӗркунне ят тухрӗ ывӑла,
Асатма пуҫтарӑнтӑм ҫула.

Пухӑнчӗ пӗр пӗчӗк кутамкка,
Ытлашши мӗн кирлӗ салтака?

Ҫӑлтӑр витӗр курӑнчӗ те ҫул,
Ывӑла каларӑм:
— Сывӑ пул!

Аҫталла ҫитерӗ вӑл ӑна?
Маншӑн паллӑ халӗ ҫак кӑна:

Куҫ пек сыхлӗ ывӑлӑм мире,
Хулапа яла, тӑван ҫӗре.

Вӑл ӑҫта ҫитсессӗн те ялан
Юнашар эп ҫӳрӗп унпалан.

Манӑн юн чупать-ҫке-ха унра,—
Акӑ мӗншӗн пулӑп эп ҫумра.

Ывӑл аллипе хам ик алла
Тытӑп ҫӗршыв панӑ пӑшала.

Хӳтӗлӗп ӑна ун пӗвӗпе,
Куҫа хупмӑп кунӗ-ҫӗрӗпе.

Ҫавӑнпа пире, Ҫӗршывӑм, шан,
Иккӗн салтакра эпир, ан ман!

## ЯЛ

Ял урамĕ. Шăкăр çурт та анкарти...
Маншăн ку вăл ял çеç мар... тĕнче картти.

Ҫил-хуралтă — хăй патшалăх тес пулать,
Ҫилĕ-йышĕ халăха пĕр тĕс парать.

Тĕрлĕ кил пур, тĕрлĕ çын кашни килре,—
Пĕр çынни — кĕрекере, тепри — ĕçре.

Пĕри ятлă, тепри ăслă тус-тăван,
Ыррине ăша хывса эс астăван.

Аякри те ырă чунлă, вашават —
Шăкăл-шăкăл калаçсан чун савăнать.

Чурăсне те, куштанне те шута ил,—
Ҫичĕ ют та пур ялтах, пур тăван кил.

Пысăк мар та пирĕн ял: тĕнче сăнне
Эп куратăп тинкерсессĕн ун çине.

* * *

Ӑмӑртӑва ман тухмалла... Ҫӗнеҫҫӗ...
Ҫӗклемелле ман штанга. Ик енче
Ун ҫатмисем куҫа шартса ҫиҫеҫҫӗ,
Вуншар ҫулсен виҫи вӗсем ҫинче.

Ҫул иртнӗҫем йывӑртарах снарядӑм,
Вӑй хушӑнса пымасть, хӑвах пӗлен.
Алла ҫитсен спортра тиркеҫҫӗ: ватӑ!..
Ӑспа кӑна ун чух эс илтерен.

Ҫынсем умне хӑюлланса тухатӑп.
Самант — ҫулсен хапи ман ал ҫинче.
Ӑна ҫамрӑкланса ҫӳле йӑтатӑп,
Тытса тӑратӑп пуҫӑм тӗлӗнче.

Куракансем каҫса кайса мухтаҫҫӗ:
Хисеп сана! Ан парӑн ватлӑха!
Усал сунакансем ҫеҫ шарламаҫҫӗ,
Вӗсем мӗн кӗтнине пӗлетпӗр-ха.

Ҫул иртнӗҫем пусать хула ман штанга.
Ӑна пӗрре ӳкерӗп алӑран.
Ҫаҫартӑр куракан епле пулсан та,—
Яш-кӗрӗм иртсе кайӗ ватӑран.

3/1722-ЧУВ
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## УХСАЙ ЯККĂВНЕ АСĂНСА

Поэт юман пулса шавланă.

*Ухсай Яккăвĕ*

### I

Çырусенче мана эс «шăллăм» теттĕн,
Хуравласа хыпар пĕлтернĕ май.
Эп вĕсене чун-чĕререн кĕтеттĕм,—
Поэзи улăпĕ çырать — Ухсай!

Тăванлатать ют çынсене поэзи,
Кĕçĕннисемшĕн пур «пичче» сăмах.
Эй, йывăр та иккен çыравçă ĕçĕ,
Шăпи те çăмăл мар иккен, чăнах.

Пĕччен чухне пуссах çитет-çке тунсăх,
Шала каять вăл кунран-кун çав чир.
Ĕнĕрленмест йĕрке кăварлă чунсăр,—
Пиччепеле чухне патвар эпир.

Ķалас сăмаххине ķалать вăл тӳррĕн,
Сăмахĕ те, йĕпли, ун саншăн пур.
Ăна илтсессĕн те, кайран эс çӳрĕн
Таса чунпа хаваслă та маттур.

Сиплет мĕнпур ăншăртсенчен сăмахĕ,
Ăна вăл ыр сунса каланăран.
Чунна хуçса хумасть санне — сăна-ха,—
Ыраттарса илсен те хушăран.

Асли, пичче пулмашкăн питĕ йывăр,—
Ун хӳттинче пурне те çăмăлрах.
Ķалатпăр татăлса: «Пиччеçĕм, сывăр...
Ӳксессĕн те эс туйăнан çумрах».

Ху выранна ҫĕн ăрава хăвартăн,
Сан йышлă шăллусем, Ухсай пичче.
Вĕсем пĕлеҫҫĕ саптарма кăвар та,
Чĕртмешкĕн ҫулăм та ҫын чĕринче.

## II

Ульяновск хăй еннех сана туртатчĕ,
Ильич ҫĕршывĕ, чи сăваплă ен.
Кунта поэтăн сарăлчĕ ҫуначĕ,
Килти пек сиплĕн, ҫирĕп те ĕлккен.

Пĕччен кăна-и вăл... Пĕрремĕш утăм
Кунта ман халăх тунă ҫутталла.
Малтанхисем чĕртсе хăварнă ҫутă
Ыттисене те витĕм памалла.

Асил: поэт юман пулса шавланă,
Чун йĕкелне те акнă вăл пĕлсе.
Ҫапла хунанă Иванов вăрманĕ,
Чăвашъене тăнланă тимлесе.

Каш-каш кашларĕ Иванов вăрманĕ.
Ҫав вăрманта эс ӳсрĕн пит патвар.
Эс ху та пултăн пĕр лаштра юманĕ,
Тантăшсемпе ҫĕклентĕн юнашар.

Йĕкелӳсем те санăн пулчĕҫ тулăх,
Ĕрчет юман вăрманĕнче хунав.
Паян ҫавах пуҫа усатпăр тăлăх,
Пĕрре те ҫăмăл мар-ҫке сансăр, ав.

## III

Килсен-кайсан кĕтсе илеттĕн ыррăн,
Чĕлхе тĕвви те салтăнатчĕ час.
— Пусăсенче епле ӳстертĕр тырă?
Мĕскершĕн Чĕмпĕръен пач шарламасть?..

Сӑмах ҫине сӑмах... Пуплешнӗ майӑн
Ҫитеттӗмӗр инҫе Мускав таран.
Шӑкӑлтатса лармашкӑн иккӗн лайӑх,
Пичче пекех чунпа эс ҫывӑхран.

Ак, хальхинче утса тухмарӗ хирӗҫ,
Ҫыру та ҫыраймарӗ вӑрахчен...
Ӑна-мӗн пӑталанӑ вилӗм чирӗ,—
Пӗлменччӗ эпӗ ҫак инкек ҫинчен.

Поэт куҫне уҫса мана палларӗ,
Каллех сӑмахӗ Чӗмпӗръен ҫинчен...
Ҫаплах сӳнмен-ха ун чӗре кӑварӗ,
Палланӑ ҫыннисем ун чӗринче.

Юлашкинчен мана аса илтерчӗ:
— Чире пула ҫырмарӑм эп вӑрах...
Хӑйне ҫаплах асаплантарчӗ терчӗ,
Хама тин туйрӑм питӗ те хӑрах...

— Тек эпӗ, тен, ура ҫине тӑраймӑп,—
Калать поэт манпа сывпуллашса,—
Ан манччӗ, шӑллӑм, ан тусамччӗ айӑп...
Пехил,— тет тинкерсе, куҫран пӑхса.

Эп тав туса та ыр сунса кӗҫ тухрӑм
Ҫак хӑтлӑ та салхуллӑ пӳлӗмрен.
Пуҫа эп шавлӑ урамра та усрӑм —
Пичче кӗтсе илеймӗ ӳлӗмрен.

Ҫавах чӗремҫӗм манӑн ҫырлахмарӗ,
Шӑпа приговорне вӑл хирӗҫлет.
Шутлатӑп хам: «Поэт вӑл юман мар-и,—
Ӳкҫессӗн те пӗтмест чӑн-чӑн поэт».

## ЯЛ СУРАНĔ

1917 çулхи ноябрьте Ирçел ялĕнче
(Ульяновск облаçĕ, Чăнлă районĕ)
кулаксен пăлхавĕнче çĕнĕ пурнăçшăн
кĕрешсе пуç хунă М. Анчиков, П. Ишмуков,
А. Маркелов, В. Маханов, И. Мелекесов,
Е. Мыгыш, П. Стаканов, Г. Тямуков
хресченсене асăнса.

«Революци пулнă теççĕ... Чăн-чăнах...
Кĕтнĕ ирĕк çитĕ пĕтĕм чухăна.
Самана сакки йăлтах улшăнмалла...» —
Калаçать ялти этем апла-капла.

Çĕр улпучĕ пуçĕпех-мĕн пĕтмелле,
Ун çĕрне хресченсене валеçмелле.
Çĕнĕ пурнăç чечеклентĕр Çĕр çинче,—
Чухăн майлă çаврăнать, эппин, тĕнче.

Кам каларĕ? Хамăръял, ахаль салтак,
Вăл хăй курнă, вăл хăй илтнĕ-мĕн йăлтах.
Килнĕ Ленин сăмахне илсе яла —
Чухăнсен çеç илмелле влаçа алла.

Çывăрмашкăн шутламасть ялти кулак,
Вăл пӳлсе хумашкăн хатĕр çĕн çула.
Сĕм-çĕрле тухать, хурах пек, тустарма,
Каçару тавраш ан кĕт эс: кам — кама?

Çĕкленет çĕрле ял çийĕн шăй та шай,
Кашкăрсен эшкерĕ тейĕн эс, ай-ай!
Аркатса-урса çӳреççĕ килĕрен,
Акăш-макăш хаяр çилĕ килнĕрен.

...Ĕмĕр çилĕ çĕкленсе вĕрет хирте,
Ял суранĕ манăçмасть çапах пирте.
Хĕрлĕ çăлтăр палăк çийĕн ялкăшать,
Аялта — вут чунлă паттăр йыш канать.

Таврара кĕрлет çĕн пурнăç, çĕн хăват,
Паттăрсен йышне ялйышăм чыс тăвать.
Çур çитсессĕн чĕрĕлет кунта чечек,
Пуçне хунă йышăн хĕрлĕ юнĕ пек.

## ҪĔРХИ САНСЕМ

Вĕр-ҫĕнĕ мăн чаршав ҫĕклерĕ
Кĕр-ҫĕвĕҫ сăрă пĕлĕтрен.
Сив ҫил те чарăна пĕлмерĕ,
Йĕпхӳ сапса тăрать питрен.

Чаршав кăштах ҫилпе чĕтренчĕ,
Ҫаллех сив ҫумăр саптарать.
Сар ҫулҫă ҫӳлелле ҫĕкленчĕ,
Вĕҫет ҫил майăн катара.

Сар ҫулҫă мар вĕҫет, сар кунăм
Иртсе юлать яланлăха.
Ахальтен мар сурать халь чунăм,
Ҫурса ҫара хăвалăха.

Тӳпе ҫаплах салху та ăмăр,
Ҫичем тĕс тăвăрлать ăша.
Ман асăмра — хĕвеллĕ ҫумăр,
Вылять пек пусăра ăрша.

## ÇЫРУСЕМ

Çырусем, çырусем, çырусем...
Йĕркисем—манăн чун таткисем...
Кавакарчăн — çунатлă конверт,
Чунама вутпа çулăм тиверт.

...Ку пулсаччĕ тахçан, ача чух...
Ман кăварлă чĕре, ĕмĕт — шух,
Вĕренетчĕ кăна-ха вĕçме
Кăвакарчăн-çыру. Чун тӳсмест...
Вутпала ялкашать ман чĕре,
Çиçĕмле çутатать çул-йĕре.
Çав кăвар тăкăнать хут çине,
Йăлт кĕрет сăвăсен виçине.
Вĕренет сарпике пĕр класра,
Ун сăнарĕ ялан ман асра.
Çивĕтне çивĕтлет иккĕлле.
Сăнĕ-пичĕ çурхи хĕвелле.
Çавă илчĕ йăлтах канăçа,
Çавă чĕртрĕ манри сăвăçа.
Сарчĕ-сарчĕ çыру çунатне,
Чун-чĕрем—малти парта патне
Вĕçеймест-ха, сикет çӳлелле,
Йăваран ӳкнĕ шух чĕпĕлле.
Инçе марччĕ çитме... Ăнсăртран
Ярса илчĕ ăна пĕр çăхан...
Çитеймерĕ вăл Çивĕт патне,
Аллипе леш хупларĕ питне...
...Çырусем...
Çырусем...
Çырусем...
Халь тĕреклĕ çунатлă вĕсем.
Кăвакарчăн-çунат пиллесе,
Ăсататăп çула тимлесе.
Шурă хут тĕрленет шăрçалла,—

Ман конвертăм вĕçет малалла.
Пур-çке ĕмĕт хули—Шупашкар,—
Çырнине эс унта ярăнтар!
Ӑаччă евĕр кĕтетĕп хыпар,—
Хуравла, хуравла, Шупашкар!..
Ӑулянма та кĕтме, хумханма,
Тепĕр чух ачалла савăнма
Тус сăмахĕ çитет аякран,
Хăрамасăр çăхан-кайăкран.
Вăл сирет инкеке пуç çинчен,
Сахал мар-çке пахи çут тĕнчен.
Сивĕ чух ăшăтать ыр сăмах,
Пулăшать ыр тĕллевшĕн тăма.

* * *

Пур Çĕр çинче сăвапла сăмахсем...
«Аван-и сывлăху? Мĕнле чупатăн?»
Тĕл пулнă май урампала иртсе —
Куллен çапла сана эп саламлатăп.

Йăламăрти ансат ыр сăмахсем...
Кам хайласа малтан сире каланă?
Кам ăшĕнче тĕвĕленсе вĕсем
Чăвашсене иленнĕ-ши яланлăх?

Калатăп та эп çав сăмахсене,
Сана кусран пăхса илетĕп тарăн.
Ман чĕрери йăлттам шухăшсене
Нисеп йĕркипелех пĕлме пултарăн.

Ахальтен мар пит хаклă-çке вĕсем,
Йăламăрти ансат та ырă сăмахсем.

* * *

Ачалăх уçланки! Унта çитсе тухатăп.
Кулать хĕвел, сĕрлет пыл хурчĕ чечексем çинче.
Çу евĕр кăмăл шăранать: вылятăп та кулатăп,
Путек пек сиккелетĕп ĕнтĕ, эй, тĕнче!

Ем-ешĕл те çап-çут уçланкă витĕр акă тухрăм,
Вĕтлĕхелле кĕç çитнине сисмен, курман.
Çапла эп турăм çухрăм хыççăн çухрăм —
Умра каш-кашласа ларать хура вăрман.

Ун витĕр тухмалла иккен тата. Унта кĕретĕп.
Умра—сукмак. Калатăп хама хам эп: «Çирĕп пул!»
Пите-куçа çапать турат. Ăна сиретĕп.
Ырса çитет ура, туртса сурать ман хул.

Çавах та хыçа юлчĕ йывăр çул.
...Хальччен эп сиртĕм чăрмава мĕн чул!

## ШУПАШКАР

Унччен пыраттӑм сан патна эп талӑк,
Паян мана тӑват сехет ҫитет.
Ҫатма ҫулпа, такам та ӑмсанмалӑх,
«Икарус» авӑ, ҫил пек, вирхӗнет.

Тавралӑха савса тинкернӗҫемӗн,
Хавхаланатӑп чӗрери хӗмпе.
Ку чух пире, ҫынна, тӗлӗнтереймӗн
Кӑмпа карти пек шур керменсемпе.

Вӗсем шӑтса ӳсеҫҫӗ йышлӑн, юрӗ,
Пире татах та кирлӗ — ӳсчӗрех.
Проспектусем, ҫип ҫапнӑ пек, тӳп-тӳрӗ—
Илем кӳреҫҫӗ тарават ҫӗре.

Ҫырма-ҫатрасенче ун-кун пытаннӑ
Ялти пек кил-ҫуртсем — музей валли.
Вӗсем ҫине йӑлт ҫырӑннӑ, тӑванӑм.
Тӗрӗсем пек, кив ӗмӗрсен палли.

Шав малаллахваскать истори ҫулӗ,
Иртсе юлаҫҫӗ талӑксем, ҫулсем...
Ҫӗн ӗмӗрсем ҫитсен пире асилӗҫ:
«Ӑҫта, мӗскер ӗҫленӗ тӑхӑмсем?»

Пире те иртнӗ куншӑн намӑс пулмӗ.
Эпир йӑлт пурнӑҫланӑ тивӗҫе.
Килес ӑрушӑн чыс-хисеп те юлмӗ
Тӑваймасассӑн паянхи ӗҫе.

## ÇУЛСЕМ

Çулсем аякка тăсăлаççĕ,
Инçет илĕртет ачаран.
Çулсем сукмакран пуçланаççĕ,
Çуралнă ялран-хуларан.

Çумрах аслă çул та иртет-мĕн,
Чĕнет вăл сана малалла.
Васканă чух лав та эс кĕтмĕн,
Утатăн çуран — каймалла!

Ача чух нумай эп çӳренĕ
Виçсе тăван çĕр талккишне.
Тусанлă çула-и йĕрленĕ
Е çăрнă лапра хăш чухне.

Пыратăн... Илтетĕн кĕç юрă
Шăнса вилнĕ ямшăк çинчен,
Тухаймĕ çула ĕнтĕ урăх —
Инкекĕ нумай ку тĕнчен.

Автобус çинчен кĕç эп илтнĕ,
Малтан курайман та ларса...
Анчах манăн ĕмĕтĕм çитнĕ,—
Çӳрерĕм тусан тустарса.

Ҫу чух эпĕ унсăр тухмастăп
Инçе-и е çывăх çула...
Тек чăрсăр çиле ăмсанмастăп,
Ҫайсан хулана е яла.

Этем çуралать аслă çулшăн,—
Ҫу паллă мана халь йăлтах.
Тĕнче, ĕмĕр чĕрĕл те улшăн!
Эс ху та вĕç-хĕрсĕр çулта.

## ТУХТĂР ТИМЛĔ ТĂРАТЬ ХУРАЛТА

Сергей Шамрай хирурга
*халалласа*

Йĕтресем çурăлмаççĕ паян,
Пульăсем шăтармаççĕ çĕре...
Инкекпе эс çавах тĕл пулан,
Йĕрлеме чарăнмасть вăл пире!
Аманать тепĕр чух вут чĕре,
Чир амакĕ илет тинкене:
Серепи йăлмакланă сире,
Ăмăр сăнĕ хуплать мал енне.

Шанчăк пур: хулара е ялта
Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта.

Çӳл тӳпе, çут хĕвел ялтăрать,
Çул чĕнет. Çӳреместпĕр çуран...
Яка çул та инкек çуратать —
Ăнсăртран эс тӳсетĕн суран.
Çĕнĕрен ялтăрать çут тĕнче,
Çĕнĕ сас янăрать урамра.
Шур халатлă хирург умĕнче
Манăн çĕнĕ тĕнче парăмра.

Шанчăк пур: хулара е ялта
Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта.
Аллăм ĕçшĕн çунать, сывă куç...
Шур халатлă çынна тайма пуç!

## ЭТЕМ ТУСĔ

*Поэма*

Ача чух манпа шӳтлетчĕ —
Астумастăп, камччĕ-ха —
Илсе парăп сана,— тетчĕ,—
Шăнкăравлă шур тиха.

*Ю. Скворцов*

Нихăҫан та манаймăн
эс ҫав лашана.

*Марсель Тири*

### I

Ахальтен мар ăстăн хăвачĕ
Упрать ача чухнехине...
Час-час кăмака ҫи туртатчĕ
Чи ваттине те вĕттине.

Шĕкĕлчесе ларатпăр йышлăн
Эпир сăмах ҫине сăмах.
Анăрататпăр умлăн-хыҫлăн
Чи аслине:
— Ҫала юмах!

Юрла-юрла ҫыхайнă майăн
Ҫилйыш валли чăлха, алса,
Кĕҫ парăнатчĕ кукамайҫăм,
Пире чунтан савăнтарса.

Таҫти-таҫти патшалăхра-мĕн,
Таҫти ҫĕрте пурнатъ Иван.
Ҫапах ăна эс ҫумма-ҫуммăн,
Ыр-сывă, юнашар туян.

Иван питех те пулнă чухăн,
Пĕртен-пĕрех иккен лаши.
Унпа тĕллев патне эс тухăн,—
Чĕтрет çĕленĕ те патши.

Çĕçĕпеле яланлăх картнăн,
Кĕрсе вырнаçнă ман ăша
Ват кукамай ярса кăтартнă
Асамлă юмахри лаша.

Юмах? Ку маншăн пулнă чĕрĕ...
Çак ăраскаллă самантран,
Кайран та çав лаша йĕрлерĕ,
Юлмарĕ шит те хыçăмран.

II

Эпир каçса кайсах вулатпăр
Кĕнекесен кĕнекине.
«Букварь»... Алла тытсан туятпăр
Чĕре хавассăн тапнине.

«Хура лаша акара...
Ула лаша картара...» —
Пăшăлтатса тăрса сасартăк
Такам калать пек хăлхаран.

Лаша! Кĕнекере те юлнă
Чи ырă ят çеç сан çинчен.
Эс пур енчен те çывăх пулнă,
Витĕмлĕрех те пуринчен.

III

— Выртма пыратăн-и? Сана та
Чĕнет Эхтюк тете пĕрле.

— Выртма?
Куçран чăр-чăр пăхатăп:
Хăрамăп-ши хирте çĕрле?

Савăнтарать юлташ сăмахĕ,
Хумхантарать те вăл пăртак.
Калатăп хам çапах:
— Чăнах-и? —
Чĕре ялт! сикрĕ кăкăрта.

— Эп темиçе те ӳкнĕ. Манăн
Мăкли те сиксе тухрĕ, кур!—
Выртма каймашкăн чĕннĕ майăн,
Мухтаннăн калаçать Якур.

Эхтюк тетепеле хăрамăн,—
Кăна чухлатăп-ха хамах.
Каç иртнине сиссе юлаймăн —
Пĕлет вăл лавĕпех юмах.

* * *

Бригадăна калатпăр «пирĕн».
Карти-вити те «пирĕнех».
Сив шыв сапсан та пистерреймĕн,—
Чуна туртать вите патнех.

Эхтюк тете вăл — «кĕсĕн конюх».
(Аслăраххи те пур иккен).
Вăл пирĕншĕн, çапла ун чунĕ!—
Юлташ та тус, вĕрентекен.

Ана эпир сырса илетпĕр,
Тытса парать пире лаша.
Эхтюк тетесĕр йăлт пĕтетпĕр—
Сиксе утланасси — нуша.

Чӗнет Эхтюк тете:
— Ҫил, Сакӑл,
Атя каятпӑр выртмана.
Чӑркать те турта пек чикаркка,
Унпа пӗр хушӑ йӑпанать.

Тухать вӑл витерен — куратӑп—
Йӑваш та ҫӳллӗ лашапа.
Мана валли чухах ку: ватӑ,
Чупать пӗртен-пӗр юртӑпа.

Эп хӑй ҫине утланнӑ майӑн
Шӑтарас пек пӑхать темме.
Сӑмах хушма та пултарсассӑн,
Вӑл калӗ: «Ан ӳксем!»—теме.

Юртса илет те чарӑнать вӑл,
Кӗтсе тӑрать хӑй тихине.
Хистетӗп мӑн саспа:
— Ну, Сакӑл! —
Тӑватӑп ҫын мӗн тунине.

Мӗнех, ара? Итлерӗ акӑ,
Каллех вӑл иртрӗ малалла.
Лашин тихи те хӑй пек, сакӑл,
Ӑна такам та савмалла.

## IV

Нева та Днепр, Висла, Нарва,
Ямайка та Байкал, Двина...
Кун пек ятсем хума пултарнӑ
Романтик чунлӑ ҫын кӑна.

Алтай та Амазонка, Вега,
Венера, Краковьяк, Амур...—

Сăмаххине тăнла-ха, акă,
Ташша та сӳтсе илĕн, мур!

Авал хресчен мĕнле-ши чĕннĕ
Чуман та чăхăм лашине?
Колхоз хресченĕ акă пĕлнĕ
Тупма лаша поэзине.

Çиçет ман тантăшăм хаваслăн,
Ахаль-и мухтанать Якур?
Пăхать те хăй, мăн çын пек, ăслăн,
Калать: «Ку—Висла. Акă, кур...

Ку — Ява. Çӳренни — Ямайка.
Тепри пулать Мадагаскар».
Йăлт географи тейĕн çакă,
Эппин, сире ăнлантарар:

Ман тусăм лашана иленнĕ,
Куллен çӳрет вăл витене.
Тен, манăн тантăшăм вĕреннĕ
Лашан хăй евĕр чĕлхине?

V

Сӳре ачи питех хисеплĕ,
Суха ачи хисеплĕрех.
Калать лаша çинчен кĕрнеклĕн,
Тен, пулнинчен те тĕплĕрех.

Мăн çын пек калаçатпăр эпĕр
Кас-кас тухсан çерем çине.
Пĕрне-пĕри кăна итлетпĕр,—
Утпа терт-кăсăк курнине.

Лаша тăварăнать те, тантăш,
Ун пек чухне урхалăха
Епле çыхас? — Пĕлесшĕн тăтăш,
Йăлт кирлĕ пĕчĕк халăха.

### VI

Эпир ӳсес чухне хăвачĕ
Ялта пĕтменччĕ-ха лашан.
Çаплах ака-суха тăватчĕ,
Тăрантаратчĕ ялйыша.

Çук марччĕ-ха, хурçи те пурччĕ,
Хутран-ситрен паратчĕ сас.
Суха та турĕ, çапрĕ, вырчĕ,—
Çапах лашасăр юрамасть.

Пĕр-икĕ ХТЗ ларатчĕ...
Сана çăлайĕç-ши вĕсем?
Капот уçса ăшне путатчĕç
Хура пит-куçлă ентешсем.

Эп ӳснĕçемĕн йышлăланчĕ
Хресчен ят панă «хурçă ут».
Ялйышăн ун çинчеччĕ шанчăк,—
Çĕнни çĕнтерчĕ тепĕр хут.

### VII

Пирте рысак пур акăш-макăш—
Байгар!
Пулать те çилçунат!
Ипподромра ялан пĕр çавă
Асамлă ят хуçаланать.

Вăл Мускавра та хўтĕленĕ
Колхозпала район чысне,—
Художник пир çине ўкернĕ
Асра тытса хăй тивĕçне.

Пĕри, бригадирахчĕ, ахăр,
Чунĕпеле — чăн меценат [1]—
Уяв иртсен, ытараймасăр,
Лаша сăнне килне çакать.

Художникĕ те хамăр ялччĕ,
Мал ĕмĕтлĕ чăваш каччи.
Ун Узалуков хушамачĕ
Е Пашалу Шерип ачи.

...Çав кун та ипподром кĕрленĕ,
Кĕçеннĕ, ыткăннă Байгар...
Акатуйне ял хатĕрленнĕ,
Яш-кĕрĕм кĕтнĕ ахаль мар!

Йĕс шăнкăрав тупса — йăлишĕн—
Çаклатнă пĕкĕ ункинчен.
Ăна илтсен, епле эс тўсĕн
Килте сĕнксе ларма пĕччен!

Урапана сирень те хурăн
Турачĕсем хуçса килсе
Эрешлесен, шăратнă юрă
Телейлĕ яшсемпе хĕрсем.

---

[1] Искусство ĕçченĕсене укçа парса пулăшакан, вĕсен хутне кĕрекен пуян çын (пирĕн эрăччен I ĕмĕрте Римра пурăннă пуян çын ячĕпе çапла каланă).

Ҫула тухма кӳлтернӗ «тышлă»—
Сăрланă, чаплă урапа.
Ача-пăча ăсатнă йышлăн
Хыҫран чупа-чупа ҫулпа.

Чăшăлтатса шăтса тухатчӗҫ
Ват инкесем хапха умне.
— Эпир те яш чухне ăстаччӗ!—
Шăлать мучи шур сухалне.

Куннехинче, ак, вăйă-кулă
Шăранчӗ кăнтăрччен кăна.
Хупларӗ пӗлӗт пек салхулăх
Хӗвеллӗ, шавлă ҫав куна.

Уяврисем те килсе ҫитрӗҫ:
— Пуҫланнă вăрҫă!..
— Пăтăрмах!.. —
Килрен киле кумса ҫӳрерӗ
Ялта хаяр, хăруш сăмах.

Эс халăх инкекне куратăн:
Кам вăйпитти — каять ҫара.
Ят тухнă терӗҫ Байгара та —
Эпир юратнă ăйăра.

**VIII**

Анчах Байгарăн одиссейӗ[1]
Кунпа кăна пӗтмерӗ-ха...
Кӗрлерӗ вăрҫă айӗн-ҫийӗн,
Ҫӗклерӗ аслă халăха.

---

[1] Темтепӗр курма тивни, терт тӳсни.

Ялтисене те ҫăмăл марччĕ.
Ваттисене, вĕттисене
Шеллевсĕр тăлăха хăварчĕ,
Йўнтерчĕ эрлĕк вĕсене.

...Хĕрарăмсем те ятлă ватă...
Тăратăп эп те пĕр вĕҫне:
Лаша пек талпăнса туртатпăр
Асаттесен сухапуҫне.

Арҫын тĕпренчĕкĕсем, эпĕр
Халь лашалла выляс чухне
Турта ҫумне-ҫке кўлĕнетпĕр,
Тăватпăр чăн лаша ĕҫне.

Ача-пăча хавас пăртакҫă
Мăннисене пулăшайсан.
Ĕҫҫи ҫитсен, шикмай акаҫă[1],
Пучах пухас пулатчĕ сан.

— Пире те йывăр,— сăпаҫҫипă!—
Пуҫсем ҫине ўкмест йĕтре...—
Час-час-ҫке калаҫатчĕ сăпă
Ватти, ăс вĕрентсе пўртре.

Ялта та тăкăнатчĕ халăх...
Кĕҫ выҫлăх ҫитрĕ — ҫĕн тăшман.
Мĕн чул ача е ватă кăлăх
Пўрни пĕтмесĕр ăсанман!

Кĕҫех киле килме пуҫларĕҫ
Аманнисем хутран-ситрен.
Ҫын ашшĕ те тăван пек мар-и
Пире те ҫавă сехетре.

---

[1] «Шĕвĕркке» тенĕ пек ăнланмалла.

Салтак килсен курма пыратпăр
Ял вĕçĕнчен вĕçне, юри.
Пĕрин алли çук, асăрхатпăр,
Теприн — хăрах иккен ури.

Тăванĕ-хурăнташĕ пынă,
Кӳрши-арши — тахçан пӳртре.
Ларать салтак, килсе вăл ырнă,
Туятăн: чунĕ — пĕлĕтре.

Ун çийĕнче — сăр гимнастерка,
Ун çумĕнче туя — патак.
Кăкри çинче медаль те пур-ха,
Вут-хĕм такса йăлтăртатать.

Çăвар карса ăна тăнлатпăр.
Калать салтак чун кĕтнине:
— Эпир Мускав панче тăратпăр...
Илтни Доватор тенине?

Тустарчĕç нимĕçе чăл-паррăн,
Айван-и пирĕн утлă çар!
Аçтан çакна манма пултарăн?!
Çын евĕр ăслăччĕ Байгар...

Хăйне-çке çăлаймарăм... ӳкрĕ...
Ун евĕр çилçунат сахал...
Сис: генерал ун чух тав турĕ
Хăюлăхшăн парса медаль...—

Кĕç чарăнса пирус чăркарĕ,—
Чĕри салтакăн сурчĕ пуль.
Сасартăк эпĕ асăрхарăм
Куç хăрпăкĕ çинче куççуль.

## IX

Этемĕн авалхи чăн тусĕ,
Мухтав сана, ĕçчен лаша!
Пире эс кӳнĕ ырлăх, усă
Укçапала-и танлашать?

Хирте эс трактор ĕçĕ тунă,
Çапăçура чух — танк ĕçне.
Иртни халь асăнмалăх юлнă
Аваллăх чатăрĕ хыçне.

Сана куçланă та йăх пуçĕ
Яман вăл çирĕп аллинчен
Çавăнтанпа эс — çыннăн тусĕ,
Эс — вăйлă, тӳсĕмлĕ, ĕçчен.

Хуçа-и тытнă е ют çын-и,
Ҫамне кирлех-ши калама?
Ыр сĕлĕпе пĕрле эс çинĕ
Чĕн чăпăркка та саламат.

Мухтав та, чыс та эсĕ курнă,
Эс тӳснĕ темĕнле те шар,
Хĕлле, çулла е кĕрлĕ-çурлă
Çынпа тек утнă юнашар.

Пĕрин эс пулнă — самăр, йăрă,
Теприн — утти аран-аран.
Эс лав турттарнă, акнă тырă,
Эс уçнă тăрмашса йăран.

Ĕçленĕ эсĕ выçă-варлă,
Çук, иксĕлмен хĕн-хур, нуша.
Пур тумхаха кая хăварнă
Эс — ватă, чăтăмлă лаша.

Эс Спартака илсе ҫӳренӗ,
Ик пин ҫултан—Буденнăя,
Чапне ку вăхăта ҫитернӗ,—
Мухтав ҫак сулăмлă вăя!

Сахал-и вирхӗннӗ тачанка?
Е ҫилҫунатлă утлă ҫар
Тăшманăн сехрине хăпартнă,
Ăна салатнă чăл та пар!

Тивсессӗн пуля — эсӗ ӳкнӗ
Хăвна кун панă ҫак ҫӗре.
Салтак пек найкăшмасăр тӳснӗ,
Шалта сан сикнӗ шух чӗре.

Сана кайран та хытă шаннă
Ҫӗршыв хуралӗ РККА.
Яш каччă пек, эс чаплăн кайнă
Яту тухсассăн салтака.

Ҫӗнни патне ҫул уҫнă парти,
Ҫӗн ӗмӗтпе ҫӗкленнӗ ял.
— Мана эс хурҫă ут ҫеҫ парччӗ!—
Тесе вăл ăшталаннă халь.

Хресчен хирне, ӗҫне ҫӗнетрӗ
«Индустри» тенӗ пӗр сăмах.
Хирте вăл «хурҫă ут» ҫӳретрӗ,
Тыр вырчӗ, ҫапрӗ те вăлах.

Чăхăмлани пулатчӗ, чăн та,
Хурҫи те, пӗл, ӗлӗкхилле.
Анчах кирли килмен-ҫке янтă,
Вăл килнӗ ӳсӗмпе пӗрле.

...Ҫулсем ҭатах та шурӗҫ. Халӗ
Хирте тек кирлӗ мар лаша.
Ҫӗлен шуса тухаймӗ!— Лайӑх
Тырпулӑмӑр!
Кам тавлашать?

Эппин, юмах-и ку е чӑн-и?
Санран-и ютшӑнчӗ хресчен?
Ҫапла, ун тусӗ ӗнтӗ ҫӗнӗ,
Хурҫа эс кӗвӗҫместӗн, тен?

Ку чух каяс тесен те чиксӗр
Сана илмеҫҫӗ тек ҫара.
Эпир мал ӗмӗтлӗ те шиксӗр—
Темле машин та пур, ара.

Машин сана хӗссе кӑларчӗ
Ку чух хула урамӗнчен.
Пушанчӗ ямшӑк пынӑ ларчӑк,—
Ута тек курмӗ-ши тӗнче?

Хире те машинсем тухаҫҫӗ
Сан вырӑнна унта-кунта.
Эс ан хӑра: Советӑн влаҫӗ
Сана кӑлармӗ панкрута.

Хирте сан ӗмӗрӳ пӗтсен те,
Ҫук, пӗтмӗн эсӗ, телее.
Олимпиадӑра та ӗнтӗ
Куратӑн пирӗн жокее.

Туртмастӑн плуг е сухапуҫӗ...
Паян-и лайӑх е ӗнер?
Умри ҫул такӑр, сывлӑш уҫӑ,
Юн хытасран ҫӗкле йӗнер.

Лаша хăвачĕ халь те кирлĕ,
Ан ютшăн, çынăç ĕç патне.
Эппин, тавлаш çилпе эс вирлĕн,
Ан яр чăн урхамах ятне!

Лаша уявĕн çук-и чапĕ?
Ялйыш тухсан ипподрома
Çерем çине ларатăп эпĕ
Вăйне те илемне курма.

Лаша вăййи хĕрӳ каварлă,—
Шăв-шав çĕклет элес-мелес.
Паха йăла туртса кăларнă
Авал хăватлă Ахиллес [1].

Этемĕн ĕмĕрхи чăн тусĕ,
Ан çун, ан ютшăн, ан хăра!
Çын ĕмĕрне тăсса кӳр усă
Ку чухнехи саманара.

Пур цирк, вăл лайăх, кам тавлашĕ—
Çулсем çинче кăлар тусан;
Сана хавас спортсмен тавращĕ,—
Ĕçӳ чылай, пĕр шутласан.

Çитсен лаша аукционĕ —
Унта та хутшăнатăн эс.
Вылятăр шав Раççейĕн юнĕ,
Çĕршыв чысне çӳле çĕкле!

Çар пуçĕ ĕмĕр асăнмалăх,
Салтак пек ӳкнĕ лашине

[1] Одиссейăра çырса кăтартнă Троя вăрçи паттăрĕ Ахиллес çав вăрçăра вилнĕ тусне — Петрокл Менетида асăнса лашасен ăмăртăвне иртгернĕ.

Хула ларттарнă — чаплă палăк—
Çак чаплă, аслă çĕр çинче [1].

Раççейĕн чысĕ — чаплă Гоголь
Сана курсассăн, пĕринче
Çырса хăварнă питĕ шукăль
Хĕм тройкăпа Раççей çинчен.

Умра ыр-сыв курать ман куçăм
Лев Толстоя йĕнер çинче.
Çапла çӳренĕ вăл, асамçă,
Çак çут тĕнче ытамĕнче.

Мухтав сана, лаша! Аван-и?
Этемшĕн ĕмĕр пурăн сыв!
Вăйне ыр лашаран пуçланă
Ракетăллă Тăван çĕршыв!

*1970—1974*

[1] Александр Македонский Буцефал лаши ячĕпе хула никĕсленĕ.

## ТУПМАЛЛИ

### Сăвăсем

Çунатăм . . . . . . . . 3
А. Г. Николаев космонавта . . . . 4
Яту чĕррисемпех . . . . . . . 6
Кил çути . . . . . . . . . 7
«Ман ялта пысăк мар укçа хакĕ...» . . 9
Ывăлăма . . . . . . . . . 10
Кам вăл ентеш? . . . . . . . 13
Иккĕн . . . . . . . . . . 15
Ял . . . . . . . . . . 16
«Ăмăртăва ман тухмалла... Чĕнеççĕ...» . 17
Ухсай Яккăвне асăнса . . . . . 18
Ял суранĕ . . . . . . . . 21
Кĕрхи сăнсем . . . . . . . 23
Çырусем . . . . . . . . . 24
«Пур çĕр çинче сăваплă сăмахсем...» . . 26
«Ачалăх уçланки! Каллех унта эп тухрăм...» 27
Шупашкар . . . . . . . . 28
Çулсем . . . . . . . . . 29
Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта . . . 30

### Поэма

Этем тусĕ . . . . . . . . 31

**Анатолий Юман**
**(Анатолий Федорович Ермилов)**

**КРЫЛЬЯ**

Стихи. Поэма

На чувашском языке

Редактор **В. П. Тимаков**
Художник **Э. М. Юрьев**
Художественный редактор **М. Д. Давлятшин**
Технический редактор **Н. В. Васильева**
Корректор **Н. П. Печникова**

ИБ 2060

Сдано в набор 01.09.87. Подписано к печати 03.06.88. НТ 23487. Формат 70×90[1]/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 1,75. Усл. кр.-отт. 1,90. Учетно-изд. л. 1,51. Тираж 1000 экз. Заказ № 3197. Изд. № 43. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428019. г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**Юман А. Ф.**

Ю 41 Çунатсем. Сăвăсем. Поэма.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988.—46 с.

ISBN 5—7670—0036—0

Кĕнекене авторăн çыннăн пурнăçри гражданла тивĕçĕ, хавхаланăвĕ çинчен çырнă сăвăсем кĕнĕ. «Этем тусĕ» поэмăра сăвăç этемлĕх историйĕнче лаша пĕлтерĕшĕ епле вырăн йышăннине сăнласа кăтартнă.

**ББК 84. Чув 7—5**

Ю $\frac{4702650000-087}{M136(03)-88}$ 43—88

15 пус

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ